# ÇĔР ПОЭЧĔ

Чăваш халăх поэчĕ Яков Гаврилович Ухсай çырнисем пирĕн литература аталанăвĕнче пысăк вырăн йышăнаççĕ. Вĕсенче чăваш кăмăл-туйăмĕ, шухăш-ĕмĕчĕ сăнарланнă. Пурнăç тупсăмне, ырăпа усал уйрăм-уççине, илемлĕх тĕсĕ-кĕввине поэт халăх ăнкарăвĕпе шайланă, унăн куçĕпе курса, унăн хăлхипе илтсе ăшне хывнă. Ухсай Яккăвĕ çырнисене хура çĕр сĕткенĕ, халăх философийĕ, ĕççынни нисепĕ тата этеплĕхĕ, сăнарлă та витĕмлĕ чăваш чĕлхи чĕрĕ вăй кӳрсе тăраççĕ. Çавăнпа вĕсене республика тулашĕнче те кăмăлласа йышăнаççĕ. «Кĕлпук мучи», «Ту урлă çул», «Шурă хурăнпа калаçни» тата ытти хăш-пĕр хайлавсене çĕршывăн пур кĕтесĕнче те пĕлеççĕ. Сăвăçăн пархатарлă ĕçне тивĕçлипе хакласа ăна халăх поэчĕ ятне панă. Я. Ухсай А. М. Горький тата К. В. Иванов ячĕпе хисепленекен литература премийĕсене илме тивĕçлĕ пулнă, вăл темиçе орден кавалерĕ те.

Çухалми юрату. 1986 çулхи июлĕн 10-мĕшĕ. Пушкăрт çĕрĕнчи Слакпуç ялне халăх йышлăн пухăннă. Ку ял — «Нарспи» авторĕн, вилĕмсĕр К. В. Ивановăн, тăван ялĕ. Çак ялтах Ухсай Яккăвĕ те çуралнă. Паянхи кун ял çыннисемшĕн, Чăваш тата Пушкăрт республикисенчен килнĕ делегацисемшĕн йывăр та хурлă кун. Вĕсем кунта чăваш халăх поэтне Я. Г. Ухсая юлашки çула ăсатаççĕ.

Кĕслету. Ку вырăна Ухсай Яккăвĕ яланах асра тытнă. Слакпуçне килмессерен çак çӳллĕ вырăна хăпарса тăван тавралăха пăхса савăннă, çакăнтах — кунçул тӳпинчен пăхнă пек — тăван халăх шăпи çинчен тарăн шухăшлă йĕркесем шăратнă. Я. Ухсай хăй виличчен хушса хăварнипе ăна шăпах çакăнта пытарнă. Унăн тăпри çинче мрамор хăма выртать, йĕри-тавра — улăх-çарансем, сăртсем. Слак шывĕ — пирĕн поэзин сиплĕ çăлкуçĕ — «шăнкăр-шăнкăр уçă янрать, чăваш чĕлхийĕ пек».

Юратрăм эп, хирсем, сире,  
Сана та, сĕм-хура вăрман!  
Нихçан та шухă чĕрере  
Çак юрату çухалмĕ ман.

Нихçан та эп хăватăра  
Манмастăп, хамăр юррăмра  
Ура тапса, пуçа ухса  
Сире мухтатăп эп, Ухсай *(1929)* —

вунсаккăрти сăвăçăн çак йĕркисенче Ухсай поэзийĕн тĕп кĕвви янраса кайнă. Çав кĕвĕре тăван çĕр сасси илтĕнет, чĕрĕ çутçанталăк сипечĕ сирпĕнсе тăрасла вылять. Тăван çутçанталăкпа пĕр кĕвĕллĕн ĕнерĕннĕ кăмăл çĕкленĕвĕ çамрăк Ухсай сăввисенче çине-çинех палăрать.

Ухсайăн малтанхи сăввисенчех лирикăлла геройăн тĕп енĕсем палăраççĕ. Вăл — хура çĕр сĕткенĕпе ÿссе тĕрекленнĕ, хăй вăйне шанакан уçă кăмăллă та ĕçчен каччă. Тĕнче çине çав çын шанчăклă куçпа пăхать, тавралăхра, кулленхи пурнăçра ĕмĕрлĕх чĕрĕ илемсем курать. Лирикăлла герой илĕртÿлĕхĕ — кăмăл-туйăм ултавсăрлăхĕнче.

Поэт нумай вĕреннĕ, сăвă культурине ÿстерсе пынă, тĕнче литературин чи паха тĕслĕхĕсемпе паллашнă. Анчах çакă унăн хăйевĕрлĕхне пĕртте чакарман, ăна уççăнрах, тасарах, курăмлăрах тунă çеç. Чăн ĕнтĕ, хăш чух Ухсай хăйĕн шалти вăйне, сăнарлăхсен хăватне ансат та яка йĕркесене вырнаçтараймасть, ун пек чухне поэт çырнисем кăткăсрах та вăрăмрах пулса тухаççĕ. Çавăнпа вăл çырнисене васкамасăр, пысăк тимлĕхпе, пĕр хут çеç мар вуласа тухма тивет.

Çĕр, çутçанталăк çинчен çырнă сăвăсенче Ухсайăн «аллине» тÿрех туйса илетĕн. «Унăн поэзийĕнче тăван уй-хирсен, ешĕл вăрмансен, шăнкăр-шăнкăр çăлкуççен, тăрă кÿлĕсен çепĕçлĕхĕпе илемлĕхĕ, чăваш халăхĕн ĕçченлĕхĕпе типтерлĕхĕ, кирек мĕнле йывăрлăхра та халăхăн сÿнми ĕмĕчĕ, пулас çутă кунсен шанчăкĕ палăрать, чăваш çĕршывĕпе унăн çыннисен пурнăçĕ курăнать», — тет Ухсай пултарулăхне тĕпчекен Ип. Иванов литературовед.

«Атă кунчинчи тетрадь». Тăван çĕршывшăн пынă Аслă вăрçăра Я. Ухсай политработник, çар журналисчĕ пулнă. Вăрçă çулĕсемпе вăл Атăлтан пуçласа Влтава шывĕ патне утса çитнĕ. Вăрçă хушнă ĕçне — фронт пурнăçĕ çинчен çырассине — чунтан парăнса тунă май поэт сăвăсемпе поэмăсем те хайламасăр тăман:

Асап сахал-и пирĕн çул çинче:
Кĕрхи йĕпе-сапа, кăрлач сивви те...
Çÿретĕп эпĕ вăрçă хирĕнче
Тăхланлă çумăр витĕр, вилĕм витĕр...

Тар шăршинче те тĕтĕмре, шывра
Çÿренĕ майăн кĕнеке çыратăп,
Ăна хам атă кунчинче усратăп.

Вăрçă темипе çырнă сăввисене поэт каярах «Атă кунчинчи тетрадь» ярăма пĕрлештернĕ.

«Винтовка» (1941) сăвва çырнă чух Ухсай Яккăвĕн асĕнче Лермонтовăн «Кинжал» тата «Поэт» сăввисен темисемпе кĕввисем тăни куçкĕрет. Умĕнхи поэтсен сăнарлăхĕсем, шухăшĕсем, кĕввисем кайранхи çыравçăсене хавхалантарнă тĕслĕхсем сахал мар. Вăхăчĕ-вăхăчĕпе тахçан çырнă япаласен пахалăхĕ çивĕчрех

курăна пуçлать, вĕсен кирлĕлĕхĕ ӳссе каять. Сăмахран, Лермонтовăн «Бородино» сăввине иртнĕ Аслă вăрçăра Мускава хӳтĕлекенсем хушшинче листовка пек салатнă. «Ребята! не Москва ль за нами? Умремте ж под Москвой. Как наши братья умирали!» — çак сăмахсем совет салтакĕсен хастарлăхне çĕкленĕ, вĕсене татăклă çапăçăва хăюллăн кĕме чĕннĕ.

Я. Ухсай сăввин пуçламăшне вулар-ха:

Хисеплĕ тусăм, шанчăклă пăшалăм
Ялтрать хĕвелĕн çутинче.

Сайралатса пичетленĕ сăмахсем Лермонтов сăввисен пуçламăшĕнче те тĕп шухăша шăнăрлаççĕ:

Люблю тебя, булатный мой кинжал,
Товарищ светлый и холодный.
(«Кинжал»)

Отделкой золотой блистает мой кинжал;
Клинок надежный, без порока.
(«Поэт»)

Икĕ автор та хĕçпăшал çинчен каланă: Лермонтов геройĕн аллинче кинжал, Ухсайăннинче — винтовка. Ик сăвăра та кăрала «шанчăклă тус» тенĕ, иккĕшĕнче те çапăçу хатĕрĕсем тасан ялтранине палăртнă.

Пĕрпеклĕхсем нумай пулсан та Ухсай шухăшĕ хăй йĕрĕпе аталанать. Лермонтов сăввинчи кинжал халĕ мухтавсăр та сарăпсăр тетте вырăнне юлнă пулсан (авторĕ ку сăнарпа гражданла тивĕçе маннă поэтсене ытарлă сăнлать), Ухсай сăввинчи винтовка çĕршыва сыхлас ĕçе малалла чыслăн тăвать:

Ăна тытса тупа тăватăп эпĕ:
Нихçан та тутăхмĕ пăшал.
Çухалмĕ ун мухтавĕпе хисепĕ,
Шалт перĕ те ӳкерĕ шалт.

«Винтовка» сăвва «Кинжал» сăвă пуçламăшĕн виçипе çырнă, анчах Ухсай пĕрремĕш йĕркене пĕр пусăмсăр сыпăк — камăнлăх аффиксĕ хушса хунă, ун вырăнне иккĕмĕш йĕркинчи юлашки пусăмсăр сыпăка пĕтернĕ. Иккĕмĕш йĕркене пусăмлă сыпăкпа вĕçлени сăвă интонацине хастарлăхпа хăюллăх сĕмĕ хушать.

Тăван чĕлхе çинчен çырнă «Чăваш чĕлхи» (1945) сăввинче Я. Ухсай халăх чун хавалĕ пирки калать. Тăван сăмах уншăн халăхăн пур чĕрĕ енĕсене пĕрлештерсе тăракан символ. Ку енĕпе Ухсай Яккăвĕ Çеçпĕл традицине тытса пырать темелле.

Тĕтреллĕ Висла леш енче çӳреп-и,
Кĕретĕп-и Карпат ту чакăлне,
Ăçта кайсассăн та илтетĕп эпĕ
Тăван чĕлхемĕн тунсăх сассине.

Вăрçă хирĕпе утса тухнă ентешĕсем тата автор хăй те Чăваш çĕрĕшĕн тунсăхласа çитни палăрать ку йĕркесенче. Хăрушă тăшмана çĕнтернĕ халăх чунĕ илемлĕ, вăрçă инкекĕ-нуши унăн çĕкленӳллĕхĕпе çепĕçлĕхне пĕтереймен. Чăваш чĕлхинче, унăн юррикĕввинче çухатусем чăтса ирттернĕ халăхăн йăпанăвĕ илтĕнет. Тин çеç-ха пирĕн халăх, ытти халăхсемпе пĕрле, вырăс çыннисемпе юнашар тăрса хăйĕн таса хаярлăхне тата паттăрлăхне кăтартрĕ, темле йывăрлăхра та тĕреклĕхне чакармарĕ:

Çулла — тусан, хĕлле юр юнлă, тарăн,
Ялсем те хуласем çинче хĕлхем.
Танкра та нӳрлĕ окопра тăнларăм
Тĕреклĕ сассуна, тăван чĕлхем!

Поэтăн чăваш чĕлхи пирки каланă ырпиллĕ сăмахĕсем хăй халăхĕн чунĕ çинчен каланиех:

Тăшман тесен — çиллен, кĕрле кĕр те кĕр,
Туссем тесен — саркайăкла ян-ян.
Хитре сассу та шухăшу ĕрчетĕр,
Кĕрхи уйри йĕтем пек пул пуян!

«Ту урлă çул» (1935 — 1952) роман чăваш ялне колхоз йĕрки килсе улăштарнине кăтартса парать. Ял халăхĕ çĕнĕ пурнăçа тӳрех йышăнасшăн пулман, анчах пĕрлешӳллĕ ĕç пайтине курнă май вăтам хресченсем те колхозалла туртăнма пуçлаççĕ. Халăх вăй хурса тăрăшнине пула ял пурнăçĕ çĕнелсе, аванланса пырать.

Ухсай романĕнче сюжет йĕрĕсем те, персонажĕсем те йышлă мар, çапах та Калляпа Чинавье инке сăнарĕсем урлă çыравçă пирĕн çĕршыв аталанăвĕн пĕр тапхăрне, çав тапхăрти халăх шухăш-кăмăлне нумай енчен тĕрĕс кăтартса пама пултарнă.

Калля — вăтам хресчен. Унăн пурнăçĕ, кулленхи хуйхи-суйхи çĕрпе çыхăннă. Тĕреклĕрех пурăнам тесен унăн ырми-канми ĕçлеме тивнĕ, хуçалăхне ăспа, шухăшласа тытса пыма хăнăхнă вăл, мул-пурлăх çитменни ăна тирпейлĕхе вĕрентнĕ. Калля пиччепе Чинавье инке хăйсен вăйне анчах шанса пурăнма хăнăхнă, пуянсене (Митти йăхне) пуççапман, ĕç çумне çыпăçман Кутăн Петĕркке йышши чухăнсене хисеп тусах кайман вĕсем. Романра тӳрремĕнех каламан та, анчах колхоза тӳрех кĕрсе кайнă чухăнсене Калля шанса каймасть, вĕсемпе çывăхланма шикленет вăл. Хăйсен хуçалăхне тытса пырайман çынсем колхозра йĕркеллĕ ĕçлеес çук пек туйăнать ăна. Малтанхи вăхăтра колхоза пĕр хĕрĕх хуçалăх пек анчах чăмăртаннă:

Пĕр лашаллă е пит юрлă
Этемсем хавасланса
Араскал тупма хăюллă
Çырăнаççĕ колхоза.

Анчах Чинавье инке васкамасть-ха:

Колхозра çынсен чăм тарĕ
Юхиччен тăрăшасси
Пулмĕ тетĕп, — янăрарĕ
Чинавье инке сасси.

Колхоза пуçтахраххисем те кĕрсе кайнă пулмалла çав, ахальтен мар Чинавье инке çапла калать:

Вăйлисем унта хĕстерĕç,
Мăльăк пек йăваш пирки
Калляна манне тыттарĕç
Кунсерен хăлха чикки.

Пĕрлешӳллĕ хуçалăха чăмăртаннă чухнехи «перегибсем» те ĕç хресченĕн кăмăлне колхоз енне çаврăнма чăрмантараççĕ. Аливан пек «активистсем» пур хуçалăха та çĕр проценчĕпех колхоза часрах çырăнтарса рапортласшăн хĕрĕнни Калля йышшине колхозран пистерет. Анчах пурнăç Калляпа Чинавьене колхоз енне çавăрать. Калля ĕçе техникăпа усă курса çăмăллатасшăн:

Уй-хирте машинăпа
Ĕçлесе пыни паха —
Вăл та кайрĕ çавăнпа
Ушкăнлă хуçалăха.

Коллективлă пурнăçран пăрăнакан ашшĕ-амăшĕнчен Якур (вĕсен ывăлĕ) уйрăлса тухни те Калляна çĕнĕ йĕркепе килĕшме хистет. Çитменнине тата Митти Хараçĕ Калля çуртне вут тĕртсе сывлăша ярать. Çакăн хыççăн колхозниксем Чинавьепе Калляна пулăшса тăраççĕ. Калляна ӳкĕте кĕртесшĕн Павăл нумай тăрăшать, ăна вăл ӳпкелесе те пăхать, ăнлантарать те, инкеке лексен пулăшу та парать. Пĕрлешӳллĕ ĕçре Калляпа Чинавье хăйсен хастарлăхне кăтартаççĕ, пĕри колхоз лашисене пăхать, тепри йĕтĕн-кантăр бригадине ертсе пыма пуçлать. Тунă çитĕнĕвĕсемшĕн Чинавье инке орден илме тивĕç пулать.

Ку роман çитменлĕхсемсĕр мар. Колхоз председателĕ (Павăл), район уполномоченнăйĕ (Лагин), Якур сăнарĕсем шупка пулса тухнă, вĕсен шалти хирĕçĕвĕсене, шухăш-туйăмĕсене автор тарăн сăнлайман. Хăш-пĕр тĕлте кăмăл пăлханăвĕсене кăтартас вырăнне факт каланипех çырлахнă (Колхозсен усси çинчен Çирĕм тăххăрмĕш çулта Чылаях вăтам хресчен Ăнланса илет ялта). Колхоз йĕркеленĕ чухнехи тĕп тӳнтерлĕхсене ку романра ӳкерсе хак паман. Çакăн сăлтавне ăнланас тесен поэмăна хăçан çырнине астумалла. Ун чухне административлă майпа «çӳлтен ирттернĕ революцие» ялхуçалăхне аталантармалли пĕртен-пĕр тĕрĕс çул тесе вĕрентнĕ, коллективизаци вăхăтĕнчи социалла çухатусене асăрхама юраман.

«Кĕлпук мучи» (1935—1953) — Я. Ухсай çырнисенчен чи паллăраххисенчен пĕри. Ку поэмăна темиçе чĕлхепе те вулаççĕ, чăвашсем хушшинче вара унăн геройĕсене пĕлмен çын та çук пулĕ. Кĕлпук чăваш çĕр ĕçченĕн пĕтĕмлетӳллĕ сăнарĕ пулса тăчĕ.

Поэмăра ӳкерĕннĕ вăхăт самаях вăрăм. Тăван çĕршывăн аслă

вăрçинчен хăйĕн йăх çыннисене («чун-кĕлпуксене») кĕтсе илекен Кĕлпук çĕр çула çитнĕ пулсан, произведенире тӳремĕн сăнарланă ĕçсем XIX ĕмĕрĕн 40-мĕш çулĕсенчех пуçланнă темелле. Çак вăрăм вăхăтра Российăра пулса иртнĕ историлле ĕçсем, тапхăрсем Чăваш çĕрĕнче те палăрнă: крепостла йĕркесем арканни, патша пусмăрне хирĕç пынă революцисем, 1917 çулти вут-юпа, граждан вăрçи, колхозсем йĕркеленĕ вăхăт, Тăван çĕршывăн аслă вăрçи — вĕсене пурне те Ухсай хăйĕн произведенийĕнче ӳкернĕ. Вăрăм ĕмĕр пурăнса ирттернĕ Кĕлпук нумай курнă, тӳснĕ, анчах йывăрлăхсене парăнман. Пурнăç ăна тĕрлĕ шар кăтартнă, çапах унăн чун вăйне хуçайман, ырă ĕмĕт шухăшĕсене пăсайман. Кун-çулĕ ăна пиçĕхтерсе, тасатса кăна пырать. Уçă кăмăллă, сăпайлă та ĕçчен çын хăй ĕмĕрне ӳпкевсĕр утса тухать. Тĕп савăнăçĕ унăн ĕçре. Ĕçе пула Кĕлпукăн ĕмĕрĕ те вăрăм, ячĕ те сумлă. Аслă вăрçă пуçлансан акă, ялтан вăйпитти арçынсем кайса пĕтсен, мĕнпур йывăрлăх ят тухайман çамрăксемпе хĕрарăмсем çине тиеннĕ. Çав вăхăтра çĕр çулалла çывхаракан Кĕлпук ахаль лармасть: йышпа пĕрле ĕçе çӳрет, хăй пултарнă таран вăйне те хурать, çамрăксене те ăс парса ĕçе вĕрентет, салтак арăмĕсене те ăшă сăмахпа лăплантарма пĕлет.

Вăтăрмĕш çулсенче совет литературинче эпос жанрне чĕртме хăтланса пăхнă, анчах ку ĕç ăнайман. Ухсай хăй поэмине çак жанр паллисемпе килĕшӳллĕн пуçласа ярать, çав вăхăтрах вĕсене пародилет те. Эпос геройĕ çуралнă самантра çутçанталăкри паллăсем çав герой пуласлăхне малтанах пĕлтерсе хураççĕ. Кĕлпук сĕм тĕттĕм каç хресчен тăвăр пӳртĕнче çуралнă, унăн шăпи çав самантран çĕр ĕçченĕн пурнăçĕпе çыхăннă:

Путексем сике-сике
Тăрăслатнă майăн
Ернĕ пулнă чĕтрене
Кив хăма урайĕ.

Кăмака тавраш̆енче
Шăрчăк та юрланă.
Çав пӳртре сăхман çинче
Пĕр ача çуралнă.

Поэт хăйĕн геройне юратать, ăна мĕскĕнлетсе е пĕчĕклетсе кăтартмасть. Пачах урăхла: хăйĕн геройĕн пуласлăхне вăл шанса, уçă кăмăлпа палăртать. Ан тив, Кĕлпукăн çăлтăрĕ тӳпере йăлкăшман пултăр (Хăйчикки чӳречерен Ылтăн çутă янă, Ун çути кӳлленчĕкре Çăлтăр пек вылянă), турă панă палли те тĕлĕнтермĕш мар (Ĕçлеме хăй килĕнче Вăл кервен çуралнă. Турпалли чавси çинче Ĕç палли пек ларнă), анчах:

Харсăрсен ăратнинче
Çак ача çуралнă.
Унăн пĕчĕк ӳтĕнче
Пысăк вăй çăралнă.

Кăвапа çухалнă хыççăн ашшĕ-амăш пит куляннă, анчах пурнăç тĕшмĕшрен кулать çеç — Кĕлпук вăрăм ĕмĕрлĕ, телейлĕ пулать. Апла критиксем поэма авторне кăлăхах тĕшмĕше савса юрлать тесе айăпланă иккен. Кĕлпук инкекĕ таçтан çӳлтен янă хĕн мар, ӳсĕр пуппа ӳсĕр хресчен ашшĕ асăрханусăр пулни чире ярать ăна: пĕри алăри ачана сивĕ шыв тултарнă касмăка чăмтарать, теприна начар чăркаса килне йăтса таврăнать. Кĕлпук вилĕмрен хăтăлса юлать:

Сывлаймасть, анчах вĕри,
Пĕчĕкçĕ чăвашăн
Карăнса тапать чĕри,
Тем пек пурăнасшăн.

Малалла ку калавра Кĕлпукăн паттăр аслашшĕ çинчен каласа панă. Ирĕклĕ кăмăллă та вăйлă арçын пулнă иккен вăл: халăх пăлхансан салтаксемпе çапăçнăшăн Çĕпĕре пуç янă ăна. Кĕлпукра та аслашшĕ енĕ пур: вĕри юнĕ ăна та каторгăна илсе çитерет.

Асамлă çĕрĕ вăйĕпе Кĕлпук патшана ларать. Тумĕ унăн пурçăнтан, тӳмисем мерчен, атă таканĕ ылтăнран; сĕтелĕ çинче пĕр арча укçа; килкартинче виçĕ мăшăр ут кӳлнĕ кӳме. Анчах патша пурнăçĕ килĕшмест Кĕлпука, хресченсем хирте суха тунă чух унăн та йышпа пĕрле шăхăрса ĕçлесси килет. Кăмăл еккипе патшана ларсанах вăл хресченсене çĕр памалла тăвать, анчах малалла аптраса çитет: ĕçсĕрлĕх йăлăхтарать ăна:

Ĕçлесе аран-аран
Тупнă çăкăр — ылтăн пек,
Умĕнчи кулачăран
Тутлă та çемçе, сипек.

Патшара ларса мана
Йăлăхтарчĕ — малалла
Эпĕ кайăп вăрмана,
Парăр пуртă ман алла!

Ĕçлĕ пурнăçа хисеплеме хăнăхнă сывлăхлă çын патша пулма килĕшмест, тарçă-тĕрçине те вăл ĕçе хăвалать. «Сăсар çĕлĕк» калаври тĕп сăнар — Кĕлпук тантăшĕ Уртемей. Ăна, Кĕлпукпа танлаштарсан, автор пĕтĕмпех юморла ӳкерет. Уртемей пуçланă ĕçсем кулăшла, вĕсем ăнăçлă вĕçленеймеççĕ, çавăнпа пирĕн ăна хĕрхенес те килет. «Сухал» сыпăкра акă вăл урса кайнă куштансем çине сиксе ӳкет, анчах ăна иккĕн-виççĕн тĕшĕрсе антараççĕ те «пăчăр тĕкĕ пек çӳçне шелсĕр» тăпăлтарма пуçлаççĕ. Кĕлпук çеç ăна çăлса хăварать.

Халĕ акă Уртемей генерала тавăрмалли самант тупнă: мăшкăллашса ăна ал паранçи тăвать, тумне хывса илсе хăй çине генерал шăлаварĕпе пиншакне тăхăнса ярать, лешĕн Уртемей кивĕ тумне тăхăнма тивет:

Хăраса ытла айванчăк
Ларакан улпутăнне
Уртемей хывса туянчĕ
Сăсар тирлĕ çĕлĕкне.

Уртемей ăна витлерĕ,
Ирĕксĕр тыттарчĕ ал:
— Саману сан иртнĕ, — терĕ, —
Халĕ эпĕ генерал.

Ку йĕркесене шӳт-пӳтшĕн мар, çук пурнăçри мĕскĕнлĕх çĕнĕ пурнăçра айванла мăнаçлăха çаврăннинчен кулянса çырать автор. Чăваш ĕççынни этеплĕхĕнче ют пурлăхпа савăнасси йăлара пулман, çакна эпир Кĕлпук патша кăмăлĕнче те курнăччĕ. Уртемей савнăçĕ вăй хурса ĕçлесе тупнăскер мар. Çавăнпа Ухсай ку калавăн вĕçĕнче халăха Уртемейрен тепре култарать: хуралта выртнă чух ыйха путнă Уртемейĕн сăсар çĕлĕкне йытăсем хывса каяççĕ:

Кутăн-пуçăн тăлпалаççĕ,
Çăлкалаççĕ те çăмне,
Харкашаççĕ, чупкалаççĕ,
Пăрахаççĕ тыр ăшне.

Вара çĕлĕк ăшне путене йăва çавăрать. Анекдот майлă хайланă çак сыпăкра Ухсай кулăшĕн пĕр паллă енне куратпăр. Поэт нумай чухне кăмăла каякан сăнарсен килĕшӳсĕр хăтланăвĕсене юморпа сивлет. Уртемей — поэтăн юратнă персонажĕ, çавăнпа ăна сатира мелĕсемпе сăнлани килĕшмест, унăн тӳнтерлĕхĕсене сӳнтерсе чакарма шăпах çăмăл кулăш вырăнлă.

Я. Ухсай ĕлĕкхи йăласене, ĕненӳсене ӳкерме юратать, вĕсем урлă чăваш халăхĕн культури çутçанталăка, çĕре хисеплессипе çыхăннине кăтартать. Поэт танлаштарусемпе анлăн усă курать. Вĕсенчи сăнарлăхсем хресчен илеме мĕнле ăнланнине аван палăртаççĕ. Акă Кĕлпук шыв ĕçсе уçăлать те, унăн шăнăрĕсем тулли «хăват кĕркунне калча çинчи тихалла сиксе вылять»; вăлах шыва кĕнĕ чух авăр тĕпне чăмса кĕрет те, ăтăр пек, куçне уçса шыв айĕнчи чулсене курать; тĕттĕм каç аякри ял çутисем Кĕлпука сап-сарă сĕлĕ пĕрчи пек курăнса мăчлатаççĕ; юланутпа сиктерсе пынă май ун хăлхинче çил сăвăр пек шăхăрать. Çăра тĕтрене Кĕлпук качака хăймипе танлаштарать; хĕллехи хире шăлакан юр ăна кĕнчеле арланине аса илтерет. Çĕр çынни куçĕпе курнă, унăн хăлхипе илтнĕ илемлĕхсем кусем.

Ухсайăн историлле темăпа çырнă произведенийĕсенчен чи палли — «Тутимĕр» трагеди (1940, 1965). Унта чăваш халăхĕ ирĕклĕхшĕн çĕкленсе Е. Пугачев ертсе пынă хресчен вăрçине хутшăннине ӳкерсе панă. Пушкăртри чăвашсем патша тарçисем хĕсĕрленине чăтаймасăр пăлхав çĕклеççĕ, анчах ăна вутпа та хĕçпе тискеррĕн пусараççĕ. Тутимĕр ашшĕне Чемее Галахов воевода тытса асаплантарать, унăн чĕлхине касса йытта парать. Вун-

çиччĕри маттур пăлхавçă Тутимĕр пушкăртсем хушшинче таркăнра кĕтӳ кĕтсе пурнать. Тепĕр икĕ çултан, Урал тăрăхĕнче Пугачев пăлхавĕ пуçлансан, пушкăртсем те çĕкленеççĕ. Вĕсене Салават Юлаев ертсе пырать. Тăван ялне таврăннă Тутимĕр Салаватпа Пугачев ячĕпе чăвашсене те пусмăрçăсене хирĕç çапăçма чĕнет. Пăлхав мĕнле пыни çинчен каласа кăтартнă та ĕнтĕ трагедире.

Трагедири çынсем виçĕ ушкăна пайланаççĕ. Пĕринче — халăха пусмăрласа тăракансем: тӳре-шара, вырăнти пуянсемпе куштансем, пăлхава путарма килнĕ офицерсемпе салтаксем. Иккĕмĕшĕнче — пусмăрçăсене хирĕç кĕрешекенсем. Çак икĕ хирехирĕç вăй хушшинче тепĕр ушкăн палăрса тăрать. Унта — Асамат, Курак, Ухливан. Вĕсем, хăйсен непĕсне нимрен мала хуракансем, пăлхав вăхăтĕнче чыссăр ĕмĕчĕсене çитересшĕн çеç тăрăшаççĕ. Геройсене çапла ушкăнласа конфликтлă çыхăнусене кӳртни трагеди тĕп шухăшне уçса пама кирлĕ пулнă. Этем пурнăçĕн чăн пысăк тупсăмĕ — пĕтĕм вăя халăх телейĕшĕн панинче. Тутимĕрпе Эрпике вилеççĕ пулин те, вĕсен шăпи куракансен шухăш-ĕмĕтне çĕклет, çутă малашлăхшăн кĕрешекенсен пархатарлă ĕçне чыслать. Обществăн ӳсĕмлĕ аталанăвне хирĕç тăракансен, аслă тĕллеве пĕлмесĕр хăйсен пайтишĕн çеç хĕрĕнекенсен, тĕттĕм те тӳнтер туртăмсем айне пулнă çынсен пурнăçĕ пуласлăхсăр. Çак шухăша Тутимĕр тăшманĕсен сăнарĕсем çирĕплетсе параççĕ. Тутимĕре Ухсай романтикăлла сăрсемпе ӳкерет. Вăл çулне кура мар паттăр та ăслă йĕкĕт. «Хăй вунçичче анчах кайсан та, Çурхи Тим шывĕ пек пăлхав Тапса кĕрленĕ вăхăтра Чи паттăр çынччĕ, Унăн ячĕ янратчĕ пĕтĕм таврара», — тет Тимĕркке хăй тантăш-тусне аса илсе. Ĕнтĕ пĕрремĕш пăлхав хыççăнах ял çамрăкĕсем таркăнри Тутимĕр çинчен юрă хума ĕлкĕрнĕ:

Кунта килсем, килсем, Тутимĕр!
Йĕнер хуратпăр ут çине.
Сан сассуна эпир кĕтетпĕр,
Хăйратпăр хамăр хĕçсене!

Курак каланине ĕненсен — «Тутимĕр пĕрре куçа шăтарнă пек Пăхса илет те вăл çынна Хăй майĕн çавăрса хурать». Вăлах тата Эрипикене çапла калать:

Ăна чăнах та ырă тура
Аспа хитре пӳ-си пама
Пĕрре те ӳркенмен, анчах
Телей валеçнĕ самантра
Шăпасăр юлнă вăл — Тутимĕр.

Романтикăлла геройсем пекех, Тутимĕр çĕкленӳллĕ кăмăлне палăртса сăнарлă чĕлхепе калаçать. Шухăш-ĕмĕчĕ унăн аслă, кăмăлĕ ырă, туйăмĕсем тарăн. Халăх сăмахлăхĕпе усă курса сăнарланă геройра романтизм паллисем тĕл пулаççех. Романтикăлла тĕссемпе

сăрланă тени Тутимĕр сăнарне реализмла ӳкернине хирĕçлемест. Романтикăлла хайлавра ырă геройсем хăйсене пĕччен туяççĕ, таврашри çынсем вĕсене ăнланмаççĕ. Тутимĕр вара пачах та пĕччен мар. Унпа юнашар пĕр шухăшлă тусĕсем пыраççĕ, Тутимĕр вилсен, унăн ĕçне малалла тăсаççĕ. Эрипике — Тутимĕр савнийĕ, сăпайлă та çирĕп хĕрарăм. Унăн чунне ирĕклĕхпе юрату туйăмĕсем вăй парса тăраççĕ. Курак ăна ирĕксĕрлесе Якунькkana качча пама тăрсан Эрпике çапла хуравлать:

Тĕкленнĕ кайăк та, анне,
Тăмасть çуралнă йăвинче,
Анчах каять чĕри тĕлленĕ,
Чĕри юратнă еннелле.

Пăлхав çĕкленсен Эрипике Тутимĕрпе пĕрле çапăçма каять. Патша салтакĕсем Тутимĕре персе ӳкерсен Эрпике савниййĕ парнеленĕ тутăра ялав пек вĕлкĕштерсе вилĕме хирĕç утать:

Епле кĕтсен те пирĕн туй
Пулмарĕ, тусăмçăм Тутимĕр.
Пире çураçрĕ çапăçу
Пĕрле пулма, пĕрле вилме.
Вĕç, тутăр, вĕç!

Тимĕрккепе Туйтирек — Тутимĕр тантăшĕсем, хăюллă та патвар, хастар кăмăллă чипер йĕкĕтсем. Иккĕшĕ те вĕсем — çĕр ĕçченĕсем, иккĕшĕ те пусмăрçăсене чунтан курайманçĕ.

Асамат — тискер те çăткăн çын. «Пĕр хăтсăр херĕп пурнăçра Нумай тертленнĕ хыççăн эпĕ Çиллентĕм, пултăм непĕссĕр. Ылхантăм пĕтĕм тĕнчене», — тет вăл хăй çинчен. Анчах кун пек кăна калани çителĕксĕр пек туйăнать. Асамат чунĕнче чи тĕттĕм те киревсĕр инстинктсем хуçаланаççĕ, вĕсем унăн юнне ачаранпах пăсаççĕ пулмалла. «Кашкăр — эпĕ! Анне мана çуратнă чух Пĕр кашкăр çурине пустарнă. Ун кăпăклă вĕри юнне мана ĕçтернĕ», — тет вăл те шӳтлесе, те чăнах. Пăлхавçăсемпе пĕрле Галахов çуртне Асамат та кĕрсе каять. Ун аллинче юри хăйранă пуртă, унпа вăл воеводăн сăпкари ачине вакласшăн хĕрĕнет. Асамат: «Анкă-минкĕ пулман-ха пуçăм, çавăнпа юсран чее çӳретĕп эпĕ», —тесе мухтанать. Чеелĕхуншăн — вăрласа-çаратса пуясси. Воевода çуртĕнчен укçа арчине хĕстерсе тарнă хыççăн Тутимĕре Асамат çапла калать:

Суратăп пăлхаву çине!
Укçа пур чух телейлĕ эпĕ,
Мĕн эсĕ, паттăр кĕрĕвĕм?
Ӳпре çеç эсĕ. Ха-ха-ха!

Я. Ухсай ăсталăхĕ ку трагедире хăватлă та илемлĕ палăрать. Пьесăри кашни çын характерĕ, сăн-сăпачĕ хăйне евĕрлĕ. Асамат, Курак, Тутимĕр, Эрпике сăнарĕсем пирĕн литературăра пĕртен-пĕрре, вĕсене манма та, вĕсемпе юнашар çав евĕр

курăмлă типсем тăратма та çук. Трагедири ырă геройсем те, нĕрсĕррисем те сулăмлă пĕлтерĕшлĕ, хăйсен идейине вĕсем ирĕклĕн, анлăн палăртаççĕ. Трагеди чĕлхи сăнарлă, чĕрĕ. Тĕссĕрлĕхпе сӳрĕклĕхе Ухсай çырнисенче тупаймăн.

«Тутимĕр» трагедие автор 1940 çулта çырнă, тата 25 çултан тепĕр хут пăхса тухса тӳрлетнĕ. Çĕнĕ варианчĕ шухăш енчен пуянланса тарăнланнă, сцена саккунĕсене килĕшерех парать, кӳлепе (форма) тĕлĕшĕнчен те çыпăçуллăрах.

«Чапаевпа тĕл пулни» (1955). Ку произведени «Ача чухнехи çăлтăрăм» тата «Силпири асамат кĕперĕ» поэмăсемпе пĕрле «Ача чухнехи çăлтăрăм» трилогие кĕрет. Автора уншăн РСФСР тата Чăваш АССР Патшалăх премийĕсене панă. Виçĕ пайне те Пĕчĕк Якку сăнарĕ пĕрлештерсе тăрать. Октябрьти революци тата граждан вăрçи çулĕсенче чăваш ялĕнче пулса иртнĕ улшăнусене çиччĕ-саккăрти ача куçĕпе курса сăнланă, хакласса вара тивлетлĕ кунçуллă çын ăсĕпе хакланă. Çапла туса сăвăç, пĕр енчен, тахçан курнине куç умне чĕп-чĕрĕ, халь пулса иртекен ĕçсем пек кăларса тăрататъ; тепĕр енчен, пулни-иртнинче философилле тупсăмсем шырать. Трилоги тĕп шухăшĕ — революци кĕрлевĕ пирĕн халăх шухăш-ĕмĕчĕсемпе килĕшӳллĕ пулнине кăтартнинче.

Пĕчĕк Якку — çут тĕнчене чунпа ытамлакан, хăйне те çутçанталăкăн чĕрĕ пайĕ пек туякан ача. Анчах çутçанталăкран чĕрĕ вăй илсе тăракан хресчен ачи-пăчин пурнăçĕ социалла танмарлăхсене пула йывăр та инкеклĕ. Телее пула, Яккупа унăн тантăшĕсем «хаяр саманара çуралнă», çав саманан «вутлă илемĕ» вĕсен шăпине тивлетлĕн çутатнă.

«Чапаевпа тĕл пулни» поэмăра ӳкернĕ ĕçсем 1919 çулта Пушкăрт çĕршывĕнче пулса иртеççĕ. Империализм тата граждан вăрçине пула юхăннă ялта выçлăх. Вăйпитти çынсем вăрçа кайса пĕтнĕ, акмасăр юлнă анасем çинче хытхура ашкăрать.

Лаша вăрри пек
Çивчĕ шăлĕ витĕр
Шĕвик шăхрать
Тыркас унти уйра, —

çавăн пек детальсемпе автор халăх шар курнине витĕмлĕ сăнлать. Лашине вăрласа кайни хресченшĕн чи пысăк инкек пулнă, çавăнпа тыркас шăхăрнине çавнашкал танлаштарни ял çине ӳкнĕ синкерлĕхе вăйлăн палăртать. Е акă тата хресчен хуçалăхĕ юхăнса çитнине поэт епле сăнарлă кăтартать: «Çави те çурли тутăхса выртаççĕ шĕкĕ кăшланă каштасем çинче». Ĕç хатĕрĕ выртни хуçа çукки çинчен сисчӳлентерет, тутăхса выртни вăраха кайнă юхăнăва кăтартать. Шĕкĕ çинĕ каштасене асăнни вара хуçалăх тусас патнех çитнине ĕнентерет. Çитменнине тата яла шуррисем килсе çаратса тăраççĕ, çавăнпа пурнăç пушшех те нушаллă. Шуррисене хăваласа пыракан Хĕрлĕ Çар яла кĕнĕ кун Якку асĕнче чи телейлĕ уяв пек юлнă.

Чапаева Якку пĕрремĕш хут акă мĕнле курать: «Лаша çинчи сар мăйăхлă этемĕн сике-сике йĕнер пусси çинче шеп кăйкăр кайăк евĕр пынăçемĕн вĕçет тир бурка çурăм хыçĕнче». Кунта, чăн та, киноран килнĕ Чапаевах, халлĕхе унăн характерĕ те, сăн уйрăмлăхĕ те палăрмасть. Анчах куншăн та автора айăпламалла мар, тĕлĕнсе ăмсанса пăхакан ача юланутçăна тĕплĕнрех курса та юлаймасть. Акă Якку Чапаев патне çăл шывĕ ăсса пырать. Халĕ ĕнтĕ çарьертӳçĕ сăнне çывăхранах курать:

Ӳт-тирĕ аттенни пек
Типшĕм унăн,
Ялти Митрюк Еккимĕ
Евĕр-çке
Ӳстернĕ мăйăхне,
Вĕçне вăл тунă
Кăтралатса
Икункă пĕтĕркке.

«Шурă хурăнпа калаçни» (1960—1964). Жанр тĕсĕпе форми енчен пăхсан «Шурă хурăнпа калаçни» — лирикăлла поэма. Унта эпикăлла (калуллă; вырăсла: повествовательный) элементсем палăрсах каймаççĕ, вĕсен вырăнне сăвăç кăмăл-туйăмне сăнласси мала тухать. Ку поэмăра сюжетлăх мар (пĕр-пĕринпе çыхăнса тăракан тĕрлĕ событисемпе сăнарсен системи), лирикăлла герой (е автор) шухăш-ĕмĕчĕ тĕп вырăнта. Хайлавра малтан пуçласа вĕçне çитиччене сăвăç кăмăл-туйăмĕ улшăнса пынине ӳкернĕ. Çĕршывра пулса иртнĕ событисене те аса илнĕ-ха унта, анчах çакна лирикăлла герой туйăмĕсене кăтартас тĕллевпе тунă. Произведени композицийĕнче сюжет паллисем вăйсăр, пĕтĕмĕшле илсен вăл философилле, публицистикăлла, лирикăлла çаврасенчен тытăнса тăрать. Пирĕн çĕршыв пурнăçĕнчи инкеклĕ те чаплă тапхăра — вăрçă çулĕсене — историлле событисем урлă мар, лирикăлла герой кăмăлĕ пиçĕхсе пынине, çухатусем чăтса ирттернĕ этем пурнăç тупсăмне тарăнрах ăнланакан пулнине кăтартса сăнланă. Поэмăна калаçу çеммипе хайлани автора хăйĕн шухăшне тарăнрах уçса пама пулăшать, чун ыратăвне те, чĕрĕ шанчăкне те ĕненмелле палăртма май парать. Шурă хурăнпа калаçнă май вăл пĕтĕм халăхпа калаçать, çавăнпа сăвăçа канăç паман ыйтусем кашни вулавçăна хускатаççĕ. Поэма геройĕ пурнăç çинчен, хăйĕн тивĕçĕ çинчен каланисем пире те тарăн шухăша яраççĕ.

Çыравçă кăмăл-туйăмĕпе туртăмĕсем, поэма тĕп шухăшĕпе илемлĕх уйрăмлăхĕсем юнашар икĕ сăнар — Шурă хурăн тата лирикăлла герой — çыхăнăвĕнче тĕвĕленсе палăраççĕ. Шурă хурăн сăнарĕнче икĕ ен асăрхама пулать. Пĕрре ăна автор тӳрĕ пĕлтерĕшпе пурнăçра нумай усă паракан йывăç пек ӳкерет, тепре пурнăç чĕрĕлĕхне палăртакан символ пек кăтартать. Чăваш ĕçченĕн ăнланăвĕнче Усăпа Илем уйрăлми пĕрлешнĕ. Çакă Ухсай çырнисенче те сисĕнет. Эпир вулакан хайлавра та сăвăç хурăна пайтине кура мухтаса илет:

Тав тикĕтпе пурак панишĕн,
Тав сухăршăн тата тепре,
Тав ешĕл милĕк кастарнишĕн,
Пурне те, хурăнсем, сире!

Анчах çакна илеме туйман, тупăша кăна хаклама пĕлекенскер çырнă теме çук. Маларахри йĕркесенче хресчен пурнăçне илемлетсе кăтартнă хыççăн çеç каланă поэт ку сăмахсене. Хурăнăн тикĕчĕ те «хăйма пек», хуппинчен тунă пуракпа чăваш çамрăкĕсем çырлана çӳреççĕ, хурăн сухăрне улахсенче хăйсен хĕрĕсене парнеленĕ (Хĕл сиввинче тăртаннă Хĕрлĕ питçăмартиллĕ хĕрсене Вăрман шăршиллĕ сухăр кирлĕ Çинçе çип пĕтĕрнĕ чухне). Тулăх та тăнăç пурнăç çынни илеме маларах та хунă пулĕ:

Туя валли çап-çамрăк хурăн
Яка пулсассăн та, хресчен
Ăна касмасăр: «Шăллăм, пурăн!» —
Тесе çеç иртнĕ умĕнчен.

Лирикăлла поэзире хурăн сăнарĕпе савни тасалăхне тата илемне ытарлă палăртаççĕ. Ун пек тĕслĕхсем Ухсай çырнисенче те пур. Ку поэмăра сăвăç çав сăнара анлăлатать, йышлă хурăн сăнарĕпе вăл вăрçăченхи яш кĕрĕме палăртать, вăрçăра пуç хунă ăру вулавçăсен умне касса тăкнă хурăн вăрманĕ пек тухса тăрать:

Сан шăллусем кунта ларатчĕç,
Йăмăкусем те ку тавра
Хĕрсем вăййи пекех тăратчĕç
Çурхи хĕвеллĕ вăхăтра.
Кăвак тӳпенелле хăюллă
Пăхатчĕç çӳллĕ те кăтра.
Тункатисем çеç тăрса юлнă —
Хунавсăр, çĕрĕк, хуп-хура.

Шурă хурăн сăнарĕпе юнашар лирикăлла герой сăнарĕ аталанса пырать. Нумай çул иртсен сăвăç хăй çуралса ӳснĕ ялне çаврăнса çитет. Тунсăхланă чунĕпе вăл ашшĕ-амăш çĕршывне туртăнать, кунта уншăн кашни вырăн хаклă, кунти тавралăх ăна тăван чун пекех çывăх:

Мана курас тесе кĕтеççĕ
Пур йывăç та, пур курăк та,
Çилсем те чăвашла пуплеççĕ,
Мана паллаççĕ пек кунта.

Ача чухне чупнă сукмаксемпе пырса сăвăç пĕччен ларакан ватă хурăн патне тухать. Сăпайлăх йĕркипе лирикăлла герой чи малтан Хурăна сывлăх сунать, ун умĕнчи айăпне (пуртăпа амантса шывне пухнăшăн) каçарттарать, йывăçран ун пурнăçĕ çинчен ыйтса пĕлет. Тăлăх юлнă хурăн тавра ĕлĕк вăрман кашласа ларнине аса илнĕ май поэт умне вăрçăра выртса юлнă тантăшĕсем тухса тăраççĕ. Сăвăç хăйĕн кулленхи пурнăçне вĕсен ячĕпе тĕрĕслесе тăни çинчен калать. Аслă вăрçă вучĕ витĕр утса тухнă [illegible]

Ч-37133
НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

çын нумай хура-шур курнă ĕнтĕ, анчах вăл ун çинчен вакласа лармасать, ăна вăрçăран таврăнайман тус-тантăшĕсен шăпи кулянтарать. Пирĕн Аслă çĕнтерӳ пысăк терт те шутсăр нумай çухату витĕр килнине астутаракан чĕрĕ палăк пек ларакан Хурăн умĕнче поэт хăй Тăван çĕршывĕпе нихăçан уйрăлми çыхăннине туять.

Ухсай сăвви-поэминче чăваш халăх историйĕнчи тĕрлĕ тапхăрсене сăнланă, пурнăç улшăннă май нацилле психологи, эстетика тата этеплĕх ăнкарăвĕсем аталанса, çĕнелсе пынине кăтартнă. Ухсай геройĕ — çĕр çынни, çĕр ĕçченĕ. Унăн шухăш-кăмăлĕнче, ĕмĕт-туртăнăвĕнче халăхăн ĕмĕртен вăй илсе пынă паха енĕсем палăраççĕ. Вăл сăпайлă та ĕçчен, ырă кăмăллă та пиçĕ çын. Ухсай юратнă çынсем хăйсене çутçанталăк пайĕ пек вăйлă та чĕрĕ туяççĕ, вĕсен ӳтĕнче çăра та сывă юн чупать, вĕсем тĕнчене çуса тасатнă пек уçă та нумай тĕслĕ кураççĕ. Поэта «экзотикăшăн» çырать, тĕшмĕшлĕ йăла-йĕркесене юратса сăнлать тесе пĕрре кăна мар калаçкаласа илнĕ. Анчах пирĕн вулакансем те, урăх халăх çыннисем те (çав шутра критиксем) сăвăç сăнарлăхĕнче чăн-чăн искусство ахахĕсем тупаççĕ, халăх ĕненĕвĕсем, йăлисем, хăнăхăвĕсем урлă чăваш çынни хал туйăмне ăнкарма тăрăшаççĕ.

Чăваш поэзийĕнче икĕ йĕр пур теççĕ: Хусанкай ячĕпе тĕнче литературы пуянлăхне (çырас ăсталăха, темăсене, этеплĕх принципĕсене) алла илсе «хамăрăн» туса пынине çыхăнтараççĕ; Ухсай çырнисенче авалласхран чĕрхаллĕн сыхланса çитнĕ «пăсăлман» туртăмсене асăрхаççĕ. Ку сăнавра тĕрĕслĕх пурах, çапах Ухсай геройĕсене социалла типсем те темелле. Чăваш халăх характерне палăртакан колоритлă сăнарсем (Кĕлпук, Калля, Уртемей т. ыт. те) — хăй вăхăтĕнчи çынсем, вĕсене пĕр саманаран теприне ирĕклĕн куçарса лартма çук.

Ухсай фольклорпа анлăн усă курать. Халăх сăмахлăхĕ ăна чĕлхе пуянлăхне ӳстерме пулăшать, витĕмлĕ те курăмлă сăнарсем тупма вĕрентет, сюжет йĕркелеме материал парать.

Хăйĕн пултарулăхне Я. Г. Ухсай тăван халăха халалланă. Çавăнпа унăн ячĕ чăваш литературинче нихçан та сӳнес çук.

***Виталий ЧЕКУШКИН***